ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6 +

40 (4506) №, 2016, октябрь (юпа), 13

1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ

Индексĕ: 54802

ХАЙТЫТĂМЛĂХ КУНĔНЧЕ

## Шкула вĕрентекен пулса кĕрсен...



**Юпа уйăхĕн пиллĕкмĕшĕ. Пограничниксен Руслан Желудкин ячĕллĕ вунпĕрмĕш класĕнче вĕренекен Женя Тимофеевăн аякранах илемлĕн курăнакан шкул патне çывхарнă май чĕри хыттăн тапма пуçларĕ. Чăнах, ăçтан лăпкă пулăн? Ара, паян, Учительсен кунĕнче, вăл пĕлӳ çуртне вĕренекен мар, педагог пулса кĕрет-çке. Çитменнине, директор лавне туртма тивет. Яваплăхĕ тем чухлех.**

«Математикăпа физика урокĕсенче итлĕç-ши ачасем мана? Шанса панă ĕçе тивĕçлипех пурнăçлама пултарăп-ши?» – тесе шикленерех шухăшларĕ каччă. «Ача-пăча тени – чĕвĕлти чĕкеç. Ăçталла илĕртетĕн, çавăнталла туртăнать. Вĕсем сана итлесси йăлтах хăвăнтан килет. Ырă кăмăллă çеç пул. Пограничниксен класĕнче ăс пухатăн-çке, Руслан Желудкин пекех хастарлăхпа палăрса тăмалла санăн. Унăн амăшĕ, Александра Константиновна, сирте хăй ывăлне курать çеç мар, юратать те. Вăл сирĕн шкула час-час пырса çӳрет. Çамрăксемпе тĕл пулса калаçать, Руслан çинчен аса илсе сăмах çăмхине сӳтет. Анне вырăнĕнчех вăл сирĕншĕн, эсир вара уншăн – юратнă ачисем. Паян вĕрентекен кунĕ, апла пулсан Александра Константиновнăна та саламламалла. Вăл та хăй вăхăтĕнче педагогра тăрăшнă. «Нимĕнле йывăрлăхра та пуçа усмалла мар, шав малалла ăнтăлмалла», – тесе çирĕплететет паттăр çар çыннин амăшĕ те. Эппин, паянхи кун ăнăçлă ирттĕр», – терĕ шалти сасă çав самантрах.

«Тĕрĕс, пирĕн ушкăн пурте Русланран тĕслĕх илет. Вăл Канаш районĕнчи Ачча шкулĕнчен ылтăн медальпе вĕренсе тухнă. Ачаран пограничник пулма ĕмĕтленнĕскер Раççей Федерацийĕн пограничниксен институтне çул тытнă. Кайран Дагестан Республикинче службăра пулнă. Шел, кун-çулĕ кĕске пулнă подполковникăн. Ăна ирсĕр боевиксем тĕп тунă... Манăн та Тăван çĕршыва юрăхлă çын пулас килет. Шкултан та Руслан пекех ылтăн медальпе вĕренсе тухăп. Спорта юратнăранах пушар хуралĕнче вăй хурас килет. Çынсене йывăр вăхăтра пулăшасси – тĕп тĕллевсенчен пĕри».

Шухăш авăрне путнăскер коридора кĕнине те сиссе юлаймарĕ.

– Ырă ир, Евгений Михайлович! – терĕ алăк умĕнче кĕпĕрленсе тăракан арçын ачасен ушкăнĕ.

Ашшĕ ячĕпе чĕннине хăнăхман яш йăл кулчĕ, хавассăн сывлăх сунчĕ. Пăшăрханни, хумханни самантрах иртсе кайрĕ. Класс алăкне уçсан сĕтел çине савăтпа лартнă чечек çыххине курчĕ. Пӳлĕме тутлă шăршă сарăлнă, пыл тути калать. Кама савăнтармĕ ĕнтĕ ку? Эппин, ачасем вĕрентекене чăтăмсăррăн кĕтнĕ...

***Элиза ВАЛАНС.***

Вăрнар районĕ,
Калинино шкулĕ.

**Тема тăсăмĕ 4-5-мĕш стр.**

**Çырăнтару – 2017**

**«Хыпар» хаçата – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ**

Хисеплĕ тăванăмăрсем! "Хыпар" хаçата
2017 çулăн пĕрремĕш çуррине илсе тăмашкăн
***юпа уйăхĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа***
***юпа уйăхĕн 23-мĕшĕччен***
ЙӲНĔ ХАКПА çырăнтармалли вунăкунлăх акци иртет.
Çак тапхăрта эрнере виçĕ хутчен тухакан
**«ХЫПАРА»** 522 тенкĕ те 78 пуспа /**индексĕ – В 4800**/,
**«ХЫПАР-эрнекуна»** 255 тенкĕ те 90 пуспа /**индексĕ – В 8353**/,
**«ТАНТĂША»** – 207 тенкĕ те 96 пуспа /**индексĕ – В 4802**/,
**«САМАНТА»** – 160 тенкĕ те 68 пуспа /**индексĕ – В 3208**/,
**«ТЕТТЕНЕ»** 126 тенкĕ те 42 пуспа /**индексĕ – В 3771**/
республикăри кашни çыхăну уйрăмĕнче е
почтальон урлă çырăнтараççĕ.
**Çырăнар "Хыпар" – туслă пурăнар!**
***"Хыпар" Издательство çурчĕ.***

# Чаплă çулсем кăна пулĕç!

**Тăваттăмĕш класри Коля Григорьев тăрăшулăхĕпе палăрать. Вĕренӳре «5» паллăпа çеç ĕлкĕрсе пыраканскер пур урока та кăмăлтан çӳрет.**



– Кашни дисциплина интереслĕ. Пĕринче ӳсен-тăранпа чĕрчун тĕнчине, тепринче мăн асаттесемпе асаннесен пурнăçне тишкеретпĕр. Виççĕмĕш урокра вара сывлăха тĕрлĕ хăнăхтарупа çирĕплететпĕр. Манăн юратнă предмет вăл технологи. Унта тĕрлĕ япала ăсталама вĕренетпĕр. Пластилинпа, хытă хутпа усă куратпăр. Эпĕ ытларах машинăсем хатĕрлеме кăмăллатăп. Килте чылай вĕсем манăн, – паллаштарчĕ хăйĕнпе шкул маттурĕ.

Арçын ача алă ĕçне кăна мар, ӳкерме те ăста. Ӳнер урокне кăмăлтан çӳрени çакна çирĕплетет. Кунта та вăл машинăсене сăнлать. Ара, çитĕнсен Коля хăй те чаплă машинăпа çӳреме ĕмĕтленет-çке! Ку шухăшĕ ăна пĕрре те канăç памасть – хăйне тăтăшах руль умĕнче курать вăл. Машинăпа ярăнма вара тикĕс çул кирлĕ. Çавна май Коля пулас профессине те суйласа хунă.

– Манăн атте – строитель. Вăл çӳллĕ çуртсем хăпартать, кĕперсем хывать… Манăн вара республикăри строитель компанийĕсен начальникĕ пулас килет! Чăваш Енре тикĕс те чаплă çулсем кăна пулĕç! – хăпартланса калаçать арçын ача.

Çывăх çыннинчен тĕслĕх илекенскер ун пекех ĕçчен пулма хăнăхать. Тĕрлĕ конкурссенче, предмет олимпиадисенче, интерактивлă вăйăсенче тăтăшах палăрать Коля. Малти вырăнсене йышăнса ашшĕпе амăшне, вĕрентекенсене савăнтарать. «Çутă ĕмĕте пурнăçа кĕртес тесен хастар та çаврăнăçуллă пулмалла», – тет вĕренӳ отличникĕ.

# Кĕнеке тусĕ Настя



Кольăн тантăшĕ Настя Степанова та вĕренӳре пысăк çитĕнӳсем тăвать. «Кашни предметпах «5» паллăпа кăна ĕлкĕрсе пыма йывăр мар-и?» – тесе ыйтсан маттурскер: «Çук», – терĕ йăл кулса. 10-мĕш класри аппăшĕ Настьăшăн – тĕслĕх. Аслин çитĕнӳсене пăхса кĕçĕнни те унран юласшăн мар. Тĕрлĕ мероприятие, концерт-уява хастар хутшăнать вăл. Мĕн пĕчĕкренех юррапа ташша ăстаскер районта çулсеренех иртекен «Канаш Ен мерченĕсем» фестивальте, «Чун ташши» конкурсра пултарулăхне кăтартать.

– Юрлама питĕ кăмăллатăп. Чăвашла тата вырăсла юрăсем ытларах килĕшеççĕ. Чи кирли – вăл хавасллă кĕвĕллĕ пулни, – калаçать хĕрача.

Настя – кĕнеке-журнал тусĕ. Ăна тăтăшах шкул библиотекинче курнипе тантăшĕсем тĕлĕнме те пăрахнă ĕнтĕ. Ытларах вăл юмахсем кăмăллать. Шухăшласа кăларнă тĕнчене пуçĕпех путсан хăвна та кĕнекери сăнарсемпе пĕрле пулнă пек туятăн. Çакă илĕртет те Настьăна. Чун вĕçевне ирĕке ярса тем тĕрлĕ тĕнчене те çитсе килме пулать-çке!

– Настя – нумай вулакансенчен пĕри. Вăл самай хулăн кĕнекесене те часах «шĕкĕлчесе» тухать, – мухтать хĕрачана Рина Михайловна Степанова библиотекарь.

Тăрăшуллă хĕр пĕрчи кашни минута усăллă ирттерме хăнăхнă. Киле панă ĕçсене хатĕрлесе пĕтерсен те вăл телевизор е компьютер умне лармасть – алла кĕнеке тытать. Е аппăшĕпе пĕрле пĕр-пĕр алă ĕçĕпе аппаланать. Сăмахран, вĕтĕ шăрçапа тĕрлесси тата унран тĕрлĕ япала ăсталасси питĕ ăнăçлă пулса тухать Настьăн. Çак енĕпе вăл конкурса та пĕрре мар хутшăннă.

– Чылай çĕрте çитĕнӳ туни, палăрни хамăршăнах усăллă. «Тантăш» тусĕсене те хастар пулма сунатăп. Аслисене итлер, пĕр-пĕринпе туслă пурăнар, аттепе аннене çитĕнӳсемпе савăнтарар, – кăмăллăн вĕçлерĕ сăмахне пултарулăхскер.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Канаш районĕ,
Чакаç шкулĕ.

## ĂШĂ САЛАМСЕМ

СМС саламсене пĕлтермелли номер:
89051975911



Шупашкарти А.Г. Николаев космонавт летчик ячĕллĕ 10-мĕш шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен **Юлия Елисеевна Анисимова** хăйĕн çуралнă кунне паллă турĕ. Ăна чунтан саламлатпăр.

Хисеплĕ, юратнă вĕрентекенĕмĕр, ĕçтешĕмĕр! Сире чун-чĕререн юрататпăр, хисеплетпĕр, сирĕнпе савăнатпăр! Савăнма сăлтавĕ те пур. Эсир вăтăр çула яхăн шкулта тăрăшатăр, ачасене тăван чĕлхен техĕмне туйтарма ăсхакăлпа мехел çитеретĕр, пархатарлă ĕçлесе вĕренӳпе сапăрлăхра курăмлă çитĕнӳсем тăватăр!

Тăван шкулти хĕрӳ ĕçе кăна мар, Чăваш наци конгресĕн ĕçне те хастар хутшăнатăр, çамрак ăрăва тăван чĕлхене юратма, ачасен ăсталăхĕпе шухăш хастарлăхне аталантарма пултарулăх конкурсĕсене йĕркелетĕр.

Хаклă Юлия Елисеевна! Малашне те пире, ачасене, хăвăрăн пуян та интереслĕ урокăрсемпе, ĕçтешĕрсене вара яланхи ăшă кулăпа, ĕçри çитĕнӳсемпе савăнтарăр. Çурхи хĕвел пек ырă кăмăл, инçе çул евĕр вăрăм ĕмĕр, куç тулли телей сунатпăр сире!

*Шкул ачисем, вĕрентекенсем, çывăх тусĕсем, Чăваш наци конгресĕн пайташĕсем.*

**ВИКТОРИНА**

# Улăп çĕрĕ çинчи уяв

Юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 31-мĕшĕччен пурне те «Улăп çĕрĕ çинчи уяв» виртуаллă викторинăна йыхравлатпăр. Ку мероприятие Чăваш Ен Раççей йышне кĕнĕренпе 465 çул çитнине халалланă.

Викторина ыйтăвĕсемпе тата условийĕпе **chuvrdub.ru** сайтра паллашма пултаратăр.

Çĕнтерӳçĕсене электрон почтăпа Диплом, хутшăнакансене Тав хучĕ ярса парăпăр.

Ыйтса пĕлмелли телефон: **8 /8352/ 52-37-22.**

*Татьяна ЗАХАРОВА.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 – (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
тивĕçĕсене пурнăçлакан
Г.А.МАКСИМОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 28-83-70 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

● ТИРАЖ
1178 экз.

● ЗАКАЗ № 3644
Пичете юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче алă пуснă.

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Чи хаклă парне



– Аннен çуралнă кунĕ тĕлне ăна халалласа сăвă çыртăм. Вăл саваннине курсан хам та хĕпĕртетĕп, – пĕлтерчĕ пĕррехинче Аня Борисова.

Паллах, ача хăй аллипе ăсталанă е чун-чĕререн тухакан ăшă саламлă парне – ашшĕ-амăшĕшĕн чи хакли. Тĕпренчĕкĕн юратăвне нимĕнлеылтăн-кĕмĕлпе те улăштарма çук-çке. Аньăн парни те амăшне питĕ килĕшнĕ. Çывăх çыннине телей кӳме пултарнăшăн савăннă хĕрача вара татах та татах сăвă çырма хавхаланнă. Çакă чун киленĕçĕ пулсах тăнă. Унсăр пуçне Аня ӳкерме те ăста, çак енĕпе тăтăшах тĕрлĕрен конкурсра мала тухать. Сăмахран, Раççей Федерацийĕн патшалăх символикине пĕлессипе çулсеренех пĕрремĕш вырăн йышăнать.

Чăннипех те хастар, пултаруллă хĕрача Аня. Шкулта лайăх вĕренекенсенскер налук темине халалланă сочиненисен конкурсĕнче /Çĕрпӳре/ çĕнтернĕ. Çавăн пекех вăл пĕтĕм тĕнчери «Гелиантус» конкурсра та пĕрремĕш вырăна тухнă.

Чечекпе çын хушшинче мĕнле пĕр пеклĕх пур? Ăна та, кăна лайăх ӳсме ăшă кирлĕ. Ырă условире çитĕнекен чечек çеçкене ларсан ăна пăхса ытарма çук. Çавăн пекех çемье ăшшине туйса ӳсекен ачан чĕринче те ырăлăх хуçаланать, вăл хăйĕн пĕчĕк ĕçĕпе те тепĕр çынна пысăк савăнăç кӳрессе шанать.

– Анне мана яланах пулăшать, хавхалантарать, – тет Аня. – Эпĕ те парăмра юлас мар тетĕп: пахчара та, кил тĕрĕшре те унăн ĕçне çăмăллатма тăрăшатăп. Çуллахи кунсенче анне ĕçе кайсан апат пĕçеретĕп, пӳртре тирпейлетĕп – вăл таврăнсанах çак тасалăха курсан кăмăлĕ çĕклентĕр тетĕп.

# Шахмат принцесси

Шахмат вăййинчен кăткăсраххи мĕн пур-ши? Анчах Елизавета Петровăна ку хăратмасть. Вăл икĕ çулта чухнех шашка-шахматпа интересленме пуçланă. Виççĕмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра республикăри шахмат турнирĕнче 1-мĕш вырăн йышăнни хăех пысăк çитĕнӳ. Ун пек кăтартусем вара хĕрачан нумай. Пур çĕнтерӳвне асăнса тухма та çук. Хăйĕн çитĕнӳвĕсемшĕн Лиза кукашшĕне тав тăвать. Василий Петрович Петров – тренер. Вăл мăнукне шахмат ăсталăхне мĕн пĕчĕкрен хăнăхтарать.



– Шашкăлла тата шахматла выляма пĕрре те йывăр мар. Пурне те спортăн çак тĕсĕпе туслашма сĕнетĕп, – тет Лиза «Тантăш» вулаканĕсене.

# Бокспа та, ӳкерчĕкпе те туслă

Кирилл Дмитриев пысăк та вăйлă пулма ĕмĕтленет. Юмахри паттăрсем пек. Анчах та пурнăçра йăлтах юмахри пек мар çав. Ĕмĕтсене пурнăçлакан ылтăн пулă та çук. Кирилл куншăн питех кулянмасть. Ĕмĕте пурнăça кĕртме хăйĕн меслечĕ пур унăн: бокс секцине çӳресе çан-çурăма çирĕплетесси. Спортăн çак тĕсĕпе туслашнăранпа арçын ача вăй хушăннине туйсах тăрать. Спорт ăмăртăвĕсене те часчасах хутшăнать вăл. Икĕ çул аслăрах пиччĕшĕнчен Мишăран тĕслĕх илет-çке.



– Бокс – вăйлисемпе чăтăмлисем валли, – тет Кирилл çирĕппĕн. – Кунта хăвăрт шухăшласа илме пĕлни те кирлĕ.

Унсăр пуçне Кирилл ӳкерме ăста. Пултарулăхĕн çак енĕпе çитĕнӳсем те пур. Республикăри сăнарлă ӳнерĕн 7-мĕш фестивалĕнче вăл, сăмахран, «Наци стилĕнчи чăрăш» номинацире 1-мĕш степень лауреачĕ пулса тăнă. Район шайĕнче иртнĕ «Пуканесен галерейи» пултарулăх конкурсĕнче те çĕнтернĕ. Ку – пысăк çитĕнӳсен пуçламăшĕ кăна. Кирилл пултарулăхне малалла аталантарса, çавăн пекех спорт тренировкисене тăтăш çӳресе тата пысăкрах кăтартусемпе савăнтарасшăн. Маттур, Кирилл!

# Шашкăлла выля та ăслă пул



Çыннăн пуç миминче мĕн чухлĕ ытларах пĕркеленчĕк, вăл çавăн чухлĕ ăслăрах теççĕ. Пĕркеленчĕксем вара мĕншĕн пулаççĕ, пĕлетĕр-и? Нумай шухăшланипе, киле панă ĕçсене пуçа çĕмĕрттерсе шутланипе. Ăс-тăна аталантармалли тепĕр меслет – шашкăлла выляни. Çапла, ку вăййа пурте çăмăллăн парăнтараймаççĕ, анчах пуç мимине пĕркелентермесĕр çĕнтерӳ патне çитейместĕн-çке. Çавăнпа та çак вăйă питĕ усăллă.

Дарья Дмитриевăна шашкăлла выляма аслашшĕ вĕрентнĕ. Халĕ хĕрача шкулти ăмăртусенче тăтăшах пĕрремĕш вырăна тухать. Спортăн ытти тĕсĕпе те туслă вăл, чупассипе те ăмăртусенче палăрать. Çакна пулах хĕрача лайăх вĕренет пулĕ. Спортпа туслă пулни пире ырă витĕм кӳрет-çке. Ӳнер шкулне çӳрекенскер çут çанталăк илемне ытараймасăр сăнать, хут çине ӳкерсе хурать.

– Пурнăçра чи пĕлтерĕшли – аттепе анне сывлăхлă пулни, вара эпĕ те хама телейлĕ туйăп. Манăн вĕсене кашни кун савăнтарас килет, – тет Даша.

*Лариса ПЕТРОВА.*

Красноармейски районĕ,
Трак шкулĕ.

# Çут çанталăк тĕсĕсемпе хавхалансан…

**Рада Герасимова Комсомольски районĕнчи Комсомольски 2-мĕш шкулĕнче вĕренет. Шкулти, районти, республикăри мероприятисене питĕ хастар хутшăнать. Ӳнер шкулне пилĕк çул çӳресе ятарлă пĕлӳ илнĕ вăл. Унта чунĕ туртнипе лекнĕ, илемлĕ ӳкерме вĕреннĕ.**



Радăн хреснашшĕ – фотограф. Унăн ӳкерчĕкĕсене сăнанă май хĕрачан та çак ĕçпе аппаланас килнĕ. Ăна ытларах пейзаж ӳкерме килĕшет.

– Çут çанталăкра тĕрлĕрен тĕссем нумай. Çавăнпа та ун йышши ӳкерчĕксенче хăвăн кăмăл-туйăмна тупма пулать. Эпĕ хаваслă хĕрача, ыттисене те манăн ырă кăмăл парнелес килет, – тет пултаруллăскер.

Хастар çыннăн тунсăхлама вăхăт çук. Ӳкерчĕкре чун киленĕçне шыракан Рада КВНа та, конкурссене те хаваспах хутшăнать. Шкулти, районти мероприятисенче ăна час-часах ертӳçĕ пулма шанаççĕ. Маттур пике иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Анапăри «Смена» лагерьте каннă вăхăтра та пуçарулăхĕпе палăрма ĕлкĕрнĕ. Унта вăл «Марс çинчи универсаллă фильтр» проект ĕçне хутшăннă, хĕрлĕ планета çинче чĕрчунсемпе ӳсентăрансем пурăнччăр тесен мĕн тумаллине шухăшласа кăларнă. Çак проект пĕрремĕш вырăн йышăннă.

– Ĕçе тин кăна пуçăнсан кăсăклах марччĕ, çĕнĕрен те çĕнĕрен шухăшсем çуралсан вара интереслĕ пулсах кайрĕ, – аса илет Рада.

Тĕрĕсех çав, вырăнта тăмасан, пуça усмасан кăна ĕç малалла каять, унăн тухăçĕ чуна савăнтарать. Çакă тата пысăкрах çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Çăмăл пулать тесе никам та шантараймасть, паллах. Анчах та хамăр вăя ĕненсен, ĕç тухăçлăхне куç умне кăларма пултарсан ăнăçу та пирĕн енче пулатех. Эппин, ачасем, Радăран тĕслĕх илĕр те конкурссемпе ăмăртусенче палăрма васкăр.

*Лада МАРКИЗОВА.*

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

## Тен, журналист пулăп

Евгений Михайлович хăйĕн урок çук чухне классене пăхса çӳрерĕ. Ара, шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлтан пурнăçламаллине пĕлет-çке хастар яш. Унăн вĕрентекенĕсем паян 10-мĕш кадет класĕнчи хастарсем. Вĕсене шанать вăл, ара, пурте пултаруллăскерсем-çке. Район, республика шайĕнче çеç мар, Раççейри ăмăртура та палăраççĕ каччăсемпе хĕрсем. Мал ĕмĕтлĕскерсенчен чылайăшĕ учитель профессине суйласа илес тĕллевлĕ.

Унăн çумĕ, Евгения Вячеславовна Ластухина, алгебрăпа геометрие кăмăллаканскер, ачасене те çак предметпах пĕлӳ пама килĕшрĕ авă.

– Хама вĕрентекенсен йышне илнĕрен малтанлăха пăшăрханса та ӳкрĕм. Ара, ытти чухне коридорта пĕрле шăкăл-шăкăл калаçакан, урамра ушкăнпа вылякана пĕлӳ памалла-им-ха тесе тарăн шухăша путрăм. Пултараймасран хăрарăм. Анчах ачасем патне класа кĕрсен çав шиклĕх таçта çухалчĕ. Ара, мĕн пĕчĕкрен учитель пулас килетчĕ те... çавăнпа-тăр самантрах чунăм çунатланчĕ. Парта хушшинче ларакан кашни çамрăка витĕр курма тăрăшрăм. Хăйсем те ман çине чĕкеç чĕпписем пек чăрлаттарса пăхрĕç. Ӳстерсе каламастăп, ачасемпе ĕçлеме мĕн тери лайăх! Вĕсен лайăх енĕсене аталантарма вăй-халăма шеллемерĕм, – йăл кулса калаçать Евгения Вячеславовна.

Çапла, кадет класĕнче ăс пухакан хастар пике унччен çар çынни пулас тĕллевлĕччĕ. Анчах çулсем иртнĕ май шухăшĕ улшăнчĕ, педагог профессийĕ уншăн калама çук сăваплă пек туйăнатчĕ. Халĕ вара аслă класа куçсан шухăшĕмĕчĕ йăлтах урăх авăрта чӳхенчĕ. Журналист ĕçне кӳлĕнесшĕн пултаруллă та вашават Женя.

– Атте пек çынпа калаçма, хутшăнма кăмăллатăп. Çырас туртăм та пысăк. Асаннепе асатте çумĕнче пулнăран вĕсен тĕлĕнмелле сăмахĕсене итлесе ӳсрĕмçке. Мĕн тери ăслă пуплеççĕ юратнă çыннăмсем! Сĕтел хушшине апата ларсан та: «Мăнукăм, туятăн-и, анне апачĕ пылтан та тутлă», – теççĕ. Е тата хĕллесерен: «Ачам, ăшăрах тăхăн. Сывлăху пĕтсен укçа парса илеймĕн», – асăрхаттараççĕ çийĕнчех. Пахчара е ытти çĕрте тăрмашнă вăхăтра та асаттепе асанне сăмахĕсем хăлхара янăраççĕ: «Ĕçе ыранччен хăварсан ĕмĕрлĕх юлать!» Ахальтен мар ваттисен сăмахĕсене çĕлĕке пуç айне хурса итлеме сĕннĕ... Юратнă çыннăмăрсен ырă сăмахĕсем пурнăçра хам вырăна тупма пулăшаççех тесе шухăшлатăп, – тет пике. – Вĕренме таçта аякка кайма ĕмĕтленместĕп. Асаттепе асаннене, аттепе аннене, аппапа шăллăма пăрахса хăварассăм килмест. Вĕсемшĕн тунсăхлассине халех чухлатăп. Шупашкарта тĕпленсен час-час тăван тăрăха килсе çӳреме меллĕ. Кил-тĕрĕшре нумай ĕç туса пулăшма пулать çитменнине. Инçетрен час-часах килеймĕн атте-анне патне. Йывăр вăхăтра та пулăшу параймăн. Манăн вара юратнă çыннăмсене яланах май килнĕ таран пулăшу парас килет... Эпĕ ял ачи-çке, çавăнпа ялсăр пурăнаймастăп. Автансем пĕр-пĕринпе ăмăртмалла киккириклетни, вăхăтран-вăхăт йытă вĕрни, хапхасем чĕриклетсе уçăлни – ял илемĕ мар-и-ха? Е тата çуллахи куна епле юратмăн? Сип-симĕс курăк шерепеленсе çилпе ачашшăн чӳхенсе ларать, путенесем авăтаççĕ. Таçта çӳлте тăри хăйĕн вĕçĕмсĕр юррине шăрантарать. Пахчасенче сливăсем пиçеççĕ, панулмисем сĕткенленсе хĕрелеççĕ. Çырмасенче вĕлтĕрен кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Вăрманти пĕчĕк уçланкăсенче, ирхи сывлăм нӳрлĕхĕпе тăртанса, хăмла çырлин тутлă шăрши сăмсана кăтăклать. Пур çĕрте те илем, пур çĕрте те чун киленет. Юратнă ялăм пирки журналист профессине алла илсен те нумай çырăп-ха, – палăртрĕ хăй шухăшне Женя.



## Кукка — тĕслĕх

Кадет класĕнче вĕреннĕрен Дмитрий Козлов чăннипех те мăнаçланать те, хăпартланать те. Паян авă хăй те алгебрăпа ачасене пĕлӳ пачĕ. Юлташĕсем ăна унччченхилле ятран чĕнмерĕç, «Дмитрий Михайлович», – терĕç хисеплесе те юратса. Учитель ĕçĕ мĕн тери яваплине паян çеç туйса илчĕ хастар яш.

– Çĕнĕ тема ăнлантарнă хыççăн ачасен пĕлӳлĕхне доска умĕнче те тĕрĕслерĕм. Лайăх шутлаççĕ задачăсемпе уравненисене, тăрăшулăхĕсене кура журнала та лайăх паллăсем çеç лартрăм. Арçын ачасемпе хĕрачасем мана ăнланни, урокра шăпăрт ларни, ыйтусене хăвăрт хуравлани – чăннипех те савăнтарчĕ. Çапла, учителĕн ачана лайăх пĕлӳ панисĕр пуçне унăн чĕрине илем кӳмелле, ырă кăмăл парнелемелле. Апла-тăк манран та педагог пулма пултарать, – йăл кулса та хавассăн калаçрĕ Дима. – Чăнах, алгебра предметне хам та питĕ юрататăп. Кунĕпех кăткăс задача-уравнени шутласа ларма хатĕр. Асаннен шăллĕне, Вениамин Геннадьевич Волков полковника, хывнă-тăр çав эпĕ. Вăл çак шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухнă. Хусанта вĕреннĕ чухне те унпа танлашакан пулман. Задача хуравĕсене те чи малтан шутласа тупнă вăл. Профессорсем те юратнă ăна. «Хресчен ачи Волков, тусусем авă каллех задачăна еплерех парăнтармаллине пĕлеймеççĕ. Атя, атя, кăтарт мĕнле шутламаллине», – хавхалантарнă час-часах преподавательсем. Кукка пирĕн пата хăнана килсен, тупата, унăн телефонĕ кашни кун, кашни минутра шăнкăртатать пулмалла. Ĕçĕнчен чăрмантараççĕ. Ĕçтешĕсен унран ыйтса пĕлмелли, канашламалли тем чухлех иккен. Эпĕ куккапа чăнласах мăнаçланатăп. Пĕчĕк чухне унăн кăкăр çинчи медаль-орденĕсене тытса пăхаттăм, савăнаттăм. Çар тумне мĕн тери тăхăнса пăхас килетчĕ тата! Ĕмĕтĕм пурнăça кĕчĕ темелле-ши? Хам та кадет пулса тăтăм. Çав тума тăхăнсан, кукка пекех Тăван çĕршыва юрăхлă çын пулма сăмах патăм. Вĕренӳре те, спортра та çитĕнӳсем тума тăрăшрăм. Чи савăнмалли – Мускаври кадетсен хушшинче иртнĕ ăмăртура пĕрремĕш вырăн тухни! Ку çитĕнӳре, паллах, атте-анне, педагогсен тӳпи те пысăк. Вĕсем пире пулăшса та хавхалантарса пынăран чи пултаруллисен йышне кĕтĕмĕр-çке. Çак çĕнтерӳ пушшех хăват хушрĕ. Хам та çар çынни пулма тĕллев лартрăм. Чăнах, ĕмĕте пурнăça кĕртме вăй-хала шеллемĕп. Курса тăрăр, эпĕ те кукка пекех шкул ятне çӳлте тытăп, – çапла пулчĕ унăн хавхалануллă сăмахĕ.

Дима – район пуçлăхĕн стипендиачĕ. Ахальтен тивĕçмен вăл ку хисепе. Пур çĕрте те пултаруллă йĕкĕт çакăншăн хăй те хĕпĕртет.

– Сцена та илĕртет мана. Çук, юрăçă мар эпĕ, сассăмпа куракана тыткăнлама пултараймастăп. Спектакльсенче вара выляма кăмăллатăп. Шанса панă сăнара чун витĕр сăрăхтарса кăларатăп. Хама питĕ килĕшет çак туртăм, – çирĕплетет мал ĕмĕтлĕ яш.

## Вальс ташшишĕн те тунсăхлаттăм

Вĕрентекен кунĕ умĕн маларах физкультура учителĕ кам пулассине палăртма та ĕлкĕрчĕç кадетсем.

– Кунта каламасăрах паллă! Паллах, Катя Судова ертсе пырĕ физкультура урокĕсене! Вăл çилрен те хăвăрт чупать вĕт, куç хупса иличчен тарăн çырмаран сăрт çине те хăпарса тăрĕ, – терĕç пурте пĕр канашлă пулса.

Мĕн хушнине ялан тĕплĕн пурнăçлакан Екатерина Анатольевна учитель ĕçĕ çăмăл маррине шăп çак кун туйса илчĕ.

– Вĕренекен пулма лайăхрах. Учителĕн вара яваплăхĕ тем чухлех. Чăтăмлăх, ĕçе тата ачасене юратни çеç йывăрлăха çĕнтерме пулăшать, – терĕ пике шухăша путса.

Саккăрмĕш класс таранччен кадетсен командирĕ пулнă Катя пĕлтĕр тăххăрмĕш класа Çĕнĕ Шупашкара куçрĕ. Олимп резервĕсен училищинче ăсталăхне туптарĕ. Çăмăл атлетикăра тĕнче шайĕнче палăрма тĕллев лартнă пикен ĕмĕчĕ самантрах сӳнчĕ. Тренировкăра ăнсăртран суранланчĕ вăл. Вуннăмĕш класа вара каялла тăван шкула таврăнчĕ.

– Шăпа çавнашкал ĕнтĕ. Мĕн тăвас тетĕн? Яланах ĕмĕтленнĕ пек пулса пымасть çав пурнăçра. Кăлтăкĕсем те сиксе тухаççĕ. Вĕсем утас çула пӳлсе пыраççĕ. Çапах пуçа усма кирлĕ мар тесе шухăшлатăп. Тĕрĕссипе, хулана атте питĕ ярасшăн марччĕ. «Вунпĕрмĕш класс кунтах вĕренсе пĕтермелле ĕнтĕ. Мĕн, хула пурнăçне ытла ир тутанас килет-им? Унта йывăрлăхĕ те тем чухлех пулĕ-ха», – хирĕçлерĕ самантрах. Анне хута кĕчĕ: «Ара, кăмăлĕ пулсан кайтăрах ĕнтĕ. Пултарулăхне аталантартăр. Спортри çитĕнĕвĕсене курах унта çул тытать те-ха ĕнтĕ», – терĕ. Эх, аннене ыталаса чуптума хатĕрччĕ, çурăм хыçĕнче те çунат шăтнăн туйрăм çав самантра. Тăван шкулти педагогсем те манăн шухăша ырламарĕç. «Килĕшмест-им кунта? Апла пире пăрахса хăварас тетĕн? Ку таранччен пĕр çемьери пек килĕштерсе пурăнтăмăр та, ĕнтĕ каятăнах-и?» – текен сăмахсем те палăртнă тĕллеврен пăрăнма пулăшаймарĕç. Тухса кайрăмах хулана!

Кăшт вăхăт иртсен çав сăмахсем пуçран кайма пĕлмерĕç. Чăнах, куллен темиçе сехет тренировка иртнĕрен киле те сайра çӳреме тытăнтăм. Икĕ е виçĕ уйăхра пĕрре! Çакă мана йăлтах пăшăрхантаратчĕ. Тăван килшĕн, ялшăн, аттепе аннешĕн, пĕрле вĕренекенсемпе педагогсемшĕн тата вальс ташшишĕн мĕн тери тунсăхлаттăм! Киле çитсен тӳрех кадет тумне тăхăнса тĕкĕр умне васкаттăм та хам çине темччен пăхса тăраттăм... Пĕлетĕр-и, шăп çавăнта шкулти чи хаваслă самантсем куç умне тухатчĕç... Кадет класĕнче вĕренни, Лев Николаевичпа Татьяна Павловна Ефимовсем пирĕншĕн тăрăшни, Раççей шайĕнчи кадетсен ăмăртăвĕнче çĕнтерни, шкулти мероприятисене хутшăнни, ваттисене пулăшма çӳрени... Çук, хаваслă вăхăтсене ниепле те манма пултараймастăм çав... Пырта тем капланатчĕ, куç куççульпе тулатчĕ... Ĕнтĕ çав пăшăрханусем хыçра. Аманнă хыççăн, авă, тăван шкула таврăнтăм. Каллех маншăн савăк кунсем пуçланчĕç. Эпĕ – унчченхиллех кадет! Мĕнех, пурнăça спортпа çыхăнтараймарăм пулин те, кулянмастăп та, пăшăрханмастăп та. Тĕнчере пĕр професси çеç мар вĕт. Хамăр шкулти педагогсем пекех ăста учитель пулăп. Вырăс чĕлхипе литературине вĕрентес ĕçре пултарулăха туптăп, – çирĕплетрĕ Катя Судова.

...Кун аван иртрĕ. Уроксем пĕтсен пурте çăмăллăн сывласа ячĕç. Учительсем те, ачисем те.

Киле кайнă чухне, çул çинче шавларĕç пĕр кана тус-тантăшсем:

– Мана паян вĕрентекен кунĕ епле иртни питĕ килĕшрĕ. Çамрăк учительсем те ырăскерсем, – терĕ ушкăнра пĕри, янравлă сасли.

– Кăмăллăскерсем! – пĕлтерчĕ хăй шухăшне иккĕмĕшĕ. – Ырă чунлăскерсем!

– Аслă пĕлӳллĕ педагогсем пекех уроксене лайăх ăнлантараççĕ, вĕсем калаçнине вĕçĕмсĕр итлес килчĕ.

Саккăрмĕш класра вĕренекен Софья Татаровăпа Анжелика Александровăн та уроксем хыççăнхи калаçăвĕ учительсем пиркиех пулчĕ.

– Аслă класра вĕренекен тусăмсене паян ашшĕ ячĕпе чĕнме йывăртарах пулчĕ. Ара, ытти чухне вĕсене ятран çеç чĕннĕçке. Çапах хăнăхрăмăр. Хамăра алла илсе урокра вĕсене тимлĕ итлерĕмĕр, мĕн хушнине тӳрĕ кăмăлпа пурнăçларăмăр. Хĕрĕх пилĕк минут мĕн тери хăвăрт иртнине сисse те юлаймарăмăр-çке. Хаваслă вăхăт вăрах тăсăлманшăн ӳкĕнтĕмĕр те. Мана паянхи пур учитель те килĕшрĕ, вĕсене пурнăçра, вĕренӳре ыррине кăна сунатăп, – терĕ Софья сарă хĕвел пек йăл кулса.

– Чăнах, паян кадетсем хăйсене чăн-чăн вĕрентекенсем пек тытрĕç. Вĕсене пăхса ларнă май – ăмсантăм. Ара, манăн та питĕ вĕрентекен пулас килетчĕ унччен. Халĕ темшĕн шухăшăм улшăнчĕ. Тухтăр профессине алла илес кăмăл пысăк. Ахальтен мар, авă, вĕренӳре «5» паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пыратăп. Чир-чĕрпе асапланакана вăхăтра пулăшу парас килет манăн. Халĕ çитменнине хими предметне те кăмăллама пуçларăм. Эппин малашне те тăрăшмалла, лайăххи енне туртăнмалла. Çап-çутă ĕмĕтĕме пурнăça кĕртмеллех. Пирĕн вара кадетсенчен вĕренмелли чылай, мĕн тери савăк кун парнелерĕç вĕсем паян! – хăпартланчĕ Анжела та.

Çапла мухтарĕç ачасем паянхи вĕрентекенĕсене...

# Манăçми ĕçтешсем



Вăрнар районĕнчи Калинино шкулĕн педагогĕсем унчченхи ăрăва та манмаççĕ, кашни уяврах тивĕçлĕ канăва тухнă учительсене саламлаççĕ. Концертпа, тутлă апатçимĕçпе, парнепе савăнтараççĕ. Вĕрентекенсен кунĕччен пĕр кун маларах та шкула пухрĕç хăй вăхăтĕнче ачасене пĕлӳ панă педагогсене. Ветерансен савăнăçĕ виçесĕр пулчĕ.

– Çакăн пек хисеп туни чун-чĕререн савăнтарать. Апла-тăк пире чăнласах та манмаççĕ, куншăн тайма пуç сире, ĕçтешсемпе çамрăксем! – терĕç шывланнă куçĕсене сăмса тутрисемпе шăлнă май.

– Пирĕн шкулта ĕçленĕ педагогсем – кашни ахах пĕрчи. Эсир кашни ачана ăстăн парас тесе ырми-канми тăрăшнине эпир кăна мар, кунтан вĕренсе тухнисем те лайăх пĕлеççĕ. Эпир сире нихăçан та манас çук, – терĕ шкул директорĕ Татьяна Павловна Ефимова.

Леонид Мефодьевичпа Роза Алексеевна Мефодьевсене те уяв питĕ килĕшрĕ. «Çынна ырă туни ырăпах таврăнать теççĕ те, çаплах иккен», – терĕç вĕсем.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ Роза Алексеевнăн вĕренекенĕсем олимпиадăсенче районта çеç мар, республикăра та яланах малти вырăнсенче пулнă. Унсăр пуçне вăл чăвашлăх аталантăр, атте-анне чĕлхи ан манăçтăр тесе ырми-канми тăрăшнă. Кашнине хаçат-журналпа, кĕнекепе туслаштарнă. «Вуламасан сăмах тĕшши те пуян пулаймĕ, тавракурăм та аталанаймĕ», – тенĕ вăл яланах.

Ют çĕршыв чĕлхине вĕрентнĕ Зинаида Ильинична Еремеева... Стена çинчи кадет тумлă ачасен сăнӳкерчĕкĕсене куç илмесĕр пăхать. «Шкулта кадет юхăмне манăн класран пуçласа ячĕç. Чăнах та, ачасем пултаруллăччĕ. Вĕренӳре кăна мар, спортра та. Ытти ăмăртура та хастарччĕ. Мускавран Раççей шайĕнчи кадет ăмăртăвĕнчен пĕрремĕш вырăнпа таврăнчĕç. Кур-ха, халĕ авă ман çине епле савăнăçлăн пăхаççĕ. Ĕнтĕ вĕсем шкултан тухса кайрĕç... Ку ушкăнран Саша Воробьев çар пурнăçне суйларĕ, вĕсен командирĕ Дина Павлова тухтăра тухасшăн. Алексей Константинов вара – пулас инженер... Пурте Тăван çĕршыва юрăхлă çын пулнишĕн чунтан хĕпĕртетĕп», – терĕ Зинаида Ильинична çаплипех стендсен çумĕнчен пăрăнаймасăр.

Тахçанах шкултан вĕренсе тухнă, халĕ Мускавра пурăнакан Владислав Алексеевич Борисов подполковник Людмила Александровна Ивановăна шыраса тупнă.

– Людмила Александровна, Эсир мана тӳрех палласа та илеймерĕр ĕнтĕ. Комсомольски тăрăхĕнчен эпĕ. Вăл вăхăтра пире математикăна вĕрентеттĕр. Питĕ юрататтăмăр сире. Ырă кăмăлăршăн, ĕçченлĕхĕршĕн. Кашнине тарăн пĕлӳ парасси – Сирĕн тĕп тĕллевччĕ. Унтанпа нумай шыв-шур юхрĕ, Эсир те авă Калинино шкулне куçнă. Сире шыраса тупрăмах! Тавах пуриншĕн те! – тенĕ подполковник телефонпа уяв ячĕпе саламласа.

Заря Филипповна Тихоновăна та хулана тухса кайнă кашни ача аса илсе тав сăмахĕ каланă. Вăл чăваш ачисене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. «Сирĕн чăвашла çеç мар, вырăсла та таса та хитре калаçмалла, пĕр йăнăшсăр çырмалла. Çав вăхăтрах атте-анне чĕлхинчен писмелле мар, ăна пушшех аталантармалла. Ыттисене тĕслĕх кăтартса хулара та чăвашла пуплемелле», – ăс панă педагог вĕренекенсене. Чăнах та, Калинино шкулĕнчен вĕренсе тухнă ачасем аслă шкулта та хисепре пулнă. Чăваш ачисем вырăсла хитре калаçни, тĕрĕс çырни преподавательсене пĕр тĕлĕнтернĕ, пĕр савăнтарнă.

Елена Дмитриевна Лотряпа Фаина Ананьевна Тимофеева та пĕрле ĕçленĕ ĕçтешĕсемпе çак кун кăмăлĕ туличченех калаçрĕç.

Шел, Шупашкарта пурăнакан Раиса Михайловна Ананьева çеç килсе çитеймерĕ уява. Апла пулин те салам сăмахĕсĕр хăвармарĕç ăна. Телефонпа ăшă сăмахсем каларĕç. Иван Михайлович Смирнов яланхиллех купăсне тăсса ячĕ. Ушкăнпа юрă саламĕ шăрантарчĕç. «Тунмастăп, куççулĕме тытса чараймарăм... Чупса пырса сирĕнпе ларăттăм, савăнăттăм, юрлăттăм. Çамрăк чухне хамăн та çапла сасă уçă та янăравлăччĕ. Иван Михайлович вара халĕ те илемлĕ юрлать, унчченхиллех. Маттур. Ĕнтĕ сакăр теçетке урлă каçрăм. Уявра мана аса илнишĕн чунтан тав тăватăп. Сирĕн ăшă сăмахăрсем чĕрене сарă çу евĕрех ирĕлтерчĕç, пурăнма вăй-хăват парнелерĕç. Эпĕ кун кĕнеки çырса пынине пĕлетĕр вĕт-ха, паян унти шурă хута хуратса савăнăçлă саманта палăртса хурăп. Сире куç умне кăларса çав йĕркесене кашни кун вуласа савăнăп», – терĕ Раиса Михайловна хĕпĕртесе.

...Ĕмĕр тăршшĕпе ачасене тарăн пĕлӳ парса тивĕçлĕ канăва тухнă учительсене те, паян та çак пысăк лава туртса пыракан педагогсене саламлакан нумай пулчĕ.

Авă Руслан Власов та учительсене асра тытса пысăк парне тунă. Вăл шкула вăтăр сакăр пинлĕх спорт хатĕрĕсем парненĕ. Чун ыйтнипе, хистенипе, ачасемпе педагогсене хисепленипе, шкула манманнипе...

– Хăй вăхăтĕнче эпир волейболла выляса районта çеç мар, республикăра та палăрнă. Ытти спорт енĕпе те пĕрре мар çитĕнӳ туни халĕ те асра. Апла пулсан паян та спорт вĕренӳпе танах пытăр. Кирек ăçта та хутшăнса çĕнтермелле пултăр, – тенĕ вăл.

Руслан хăй вăхăтĕнче турник çинче туртăнса пысăк кăтартусемпе савăнтарнă.

– Пурте пĕрле кар тăрса ĕçлесен çеç эпир çĕршывшăн çитĕнӳ тăватпăр. Учитель пĕччен нимĕн те тăваймасть. Ашшĕ-амăшĕ пире ăнланса, пулăшса пырсан тата çăмăлрах. Сентябрĕн пĕрремĕшĕнче шкула тин килнисем вĕрентекенсене халалласа чуна тивмелле сăвă каларĕç. Кăмăл çĕкленчĕ. Апла пулсан малалла ĕçлеме шанăç та, малашлăх та пур! – пĕтĕмлетрĕ хăй шухăшне шкул директорĕ Татьяна Павловна Ефимова.

***Элиза ВАЛАНС.***

Вăрнар районĕ,
Калинино шкулĕ.




## Вырмара

Комбайнерсем уй-хирте
Тыр выраççĕ кунĕпе.
Часах кĕртĕç кĕлете
Ыраш, тулă, урпине.

Уйра хир карапĕсем
Тулла вырса кĕртеççĕ.
Ял хуçалăх çыннисем
Йĕтем çинче ĕçлеççĕ.

Хир карапĕ уламне
Паккусласа хăварать.
Комбайн хыççăн юлнине
Трактор тĕркеме пухать.

## Кĕркунне

Хура кĕркунне те килчĕ,
Тăкрĕ çулçă хурама.
Çумăр çурĕ, сив çил вĕрчĕ,
Тунсăх пусрĕ чунăма.

Çумăр çăвать кунĕпе,
Сар хĕвел пачах пăхмасть.
Чун савни ăш сăмахне
Ман пата шăрçаламасть.

Йăмăк, шăллăм вăрмана
Кайрĕç паян кăмпана:
Илемпеле киленме,
Çулçă тăрăх çÿреме.

Хĕвел пăхрĕ, çавăнтах
Çитрĕ ылтăн кĕр кунта.
Çулçă вĕлтĕр! çаврăнать,
Ăшă çилпе тăкăнать.

Хур кайăксем кăнтăра,
Вĕçсе кайрĕç хĕл каçма.
Кукка ларчĕ трактăра,
Кайрĕ çĕр сухалама.

Авăн уйăх варринче
Чăвашсем улах лараççĕ.
Кĕр сăри уявĕнче
Чăн чăвашла таш ташлаççĕ.

## Ăшă çумăр

Атте, анне, эпĕ – виççĕн
Çум çумласа ларатпăр.
Катрам пĕлĕтсем те иккĕн –
Çÿл тÿпене пăхатпăр.

Хура вăрман каш кашлать,
Ак тавра тĕксĕмленет.
Тырă-пулă хумханать,
Варкăш çилĕ вĕркелет.



⊚ *Даша МИХАЙЛОВА*
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ***ÿкерчĕкĕ.***

Çавра çил çаварттарать,
Вĕçтерет кăна тусан.
Шултра çумăрĕ çăвать
Аслати сасси кайсан.

Ăшă, ырă, хавас çумăр
Тăван ялăма савать.
Ял çыннисем, халь курсамăр –
Урам тăрăх шыв юхать!

***Николай ЕЛЛИН.***
Патăрьел районĕ,
Çĕнĕ Ахпÿрт ялĕ.

## Шута ил

Тăван ялăм, савнă кил,
Эс паратăн мана пил:
Кун-çулăма упрама,
Тус-тăвана юратма.

Ват çынсенчен пур пехил.
Савса чунтан асна ил.
Ырă ĕçпе туслашсам,
Çирĕп сывлăхлă пулсам.

Таврана лăпкать шух çил,
Ун кăмăлне шута ил.
Вĕрен куллен хаклама
Чунри таса туйăма.



⊚ *Аня МИХАЙЛОВА*
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ***ÿкерчĕкĕ.***

## Туссем

Ачаран эпир туссем –
Пĕр ялти, класри хĕрсем.
Юрататпăр вĕренме,
Вăй хурса нумай пĕлме.
Вырăсла е чăвашла,
Хăш чухне акăлчанла
Кĕнеке нумай вулатпăр,
Ăс çумне пĕлÿ хушатпăр.
Пур ĕçре эпир хастар.
Туссем пĕрле, юнашар.
Спортпа туслă пурăнни –
Пире вара чи кирли!
Улт-çич çухрăм утасси,
Ишесси е чупасси –
Пирĕншĕн вăл ним те мар,
Сывлăх пулмĕ çеç начар.
Коля, Женя, Алевтина,
Софья, Даша, Августина –
Пурте пĕрле урамра,
Ав, вылятпăр футболла.
Дима Павлов – шахматист,
Ак Володя, вăл – самбист.
Тĕрлĕ ăмăртусенче
Пур медаль те вĕсенче!
Çуллахи каникулта
Волейбол кĕтет ялта.
Ватти-вĕтти пурте пур!
Пĕринчен тепри маттур!
Хĕл çитсессĕн ушкăнпа
Пĕрле харăс пухăнса
Йĕр йĕрлетпĕр йĕлтĕрпе,
Чак! тăватпăр туйипе.
Манăн ялăм – Шурçырма.
Туссем хавас тупăшма!
Спорт вăл пирĕншĕн хаваслăх!
Спорт пуриншĕн те пуласлăх!

***Августина ПЕТРОВА.***
Çĕрпÿ районĕ,
Патăрьел шкулĕ.



⊚ *Даша МИХАЙЛОВА*
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ***ÿкерчĕкĕ.***



⊚ *Кристина ВАСИЛЬЕВА*
(Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа)
***ÿкерчĕкĕ.***

***

Тĕнчемĕрте хуçа илемлĕх,
Хĕвел те, ĕмĕт те, тивлетлĕх.
Ахах та ылтăн мар, паллах,
Юлать çапла яланлăхах.

Тата ыр кăмăлăн хĕлхемĕ,
Тур панă пурăнăç сул-йĕрĕ.
Укça парсан та вĕсене
Пĕрех илеймĕн нихăшне.

***

Хитре ку пурнăç çав-çавах
Асаплă, тертлĕ пулсан та…
Ятна яраççĕ – яччăрах,
Ан хуçăл, тусăм, хурланса.

Тултан кĕрсессĕн кил-çуртна,
Пит йывăр чух çурта лартсам.
Çуратнăшăн тĕнче курма
Аçу-аннÿне тав тусам.

Хăтарччăр, çăлччăр усалтан
Пире пирĕштисем çÿлтен.
Пĕр айăпсăр çынран кулсан
Лекеççĕ тамăка çынсем.

***Николай ЕРЕМЕЕВ.***
Чĕмпĕр.

## Çăлтăрсем

Çăлтăрсем, çăлтăрсем.
Мĕн калаççĕ-ха вĕсем?
Çутатаççĕ тÿпере.
Йыхăраççĕ çÿлелле.
Хăпарсчĕ тÿпене
Çутă çăлтăрсем патне.
Тинкерес аялалла
Сăнаса тăван яла.
Андриян пур чăвашсен –
Космонавтсен ретĕнчен.
Тухнă тĕнче усăхне
Çĕклеме чăваш ятне.

## Кăмпара

Пултăм эпĕ кăмпара
Хамăр ялти вăрманта.
Вырăн çук халь кунтăкра –
Кăмпи тĕрлĕрен тата!
«Маттур, пултаратăн! –
Терĕ асатте. –
Кирлĕ çын пулатăн
Ку ĕçченлĕхпе».



⊚ *Даша МИХАЙЛОВА*
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ***ÿкерчĕкĕ.***

## Кушак

Аслă çулăн айккипе
Йăлтăртатса куçĕпе,
Ав, пырать хура кушак,
Чарăнса тăрать пĕртак.

Ут эс хăвăн çулупа,
Ан пăх усал куçупа.
Эп кÿренмĕп-ха сана
Эс тĕкĕнмесен мана.

***Марина МАДЕЕВА.***
Шупашкар,
33-мĕш шкул.

## Пăрçа

Пахчара ÿсет пăрçа –
Юратать ăна хуçа:
Кун сиктерсе шăварать,
Ÿсме нÿрĕк пулăшать.

Пулса çитсен хутаççи
Кусне хĕсет кунĕпе.
Шиклентерет кăшт уççи
Тытса çиме пусĕпе.

Пур мĕн… хуçаран хуçа,
Курăнать кăштах куçа.
Шалта пит хуçаланать,
Кашни пĕрче шăтарать.

Йÿççи лексен çăвара
Лĕклентерет пĕр кана.
Ан васка эс, тыт асра…
Уçса пăх малтан ăна.

Пурнăçра пулать çапла
Пĕлмесен юлташ тупма.
Сиенлет кун-çулăра
Хăй пулсассăн та çумра.

***Светлана НИКОЛАЕВА.***
Вăрмар районĕ,
Вăрмар.



⊚ *Диана КРАСНОВА* (Красноармейски районĕ, Пикшик шкулĕ) ***ÿкерчĕкĕ.***

● ХĔЛЕ ХАТĔРЛЕНЕТПĔР

## Çăратнă сĕтпе панулми нимĕрĕ

**Çимĕçе хатĕрлеме 2 килограмм панулми, 450 грамм çăратнă сĕт, 50 грамм шыв, хăвăра кирлĕ чухлĕ сахăр кирлĕ**.

Çунă, хуппинчен тасатнă панулмие ваклăр та шыв тултарнă кастрюле ярăр. Çимĕç йӳçекрех пулсан сахăр хушăр. Савăта хупласа вăйсăр çулăм çинче панулми çемçеличчен /20 минут пек/ тытăр.

Хатĕр панулмие блендерпа вĕтетĕр те çăратнă сĕтпе хутăштарса газ çине лартăр. Пăтрата-пăтрата 10 минут пĕçерĕр. Вĕри нимĕре стерилизациленĕ типĕ кĕленчене тултарса хуплăр. Ăна сивĕрех çĕрте, 3 уйăхран ытла мар, усрама юрать

## Тăварланă кăмпа

**Çимĕç валли 2 килограмм вăрман кăмпи, 200 грамм хăйма, 6 лавр çулçи, 8 çаврака пăрăç пĕрчи, 5 хурлăхан çулçи, 5 чие çулçи кирлĕ.**

Кăмпана хатĕрлес умĕн шыва ярса пĕр талăк тытмалла. Шывне пĕр-икĕ хут улăштармалла. Ун хыççăн юхакан шывра лайăх çуса кастрюле хумалла. Шыв хушмалла. Лавр çулçи, пăрăç, тăвар ытларах хушса çулăм çине лартмалла. Вĕреме кĕнĕ хыççăн çур сехет пĕçермелле.

Стерилизациленĕ кĕленче тĕпне кăштах пăрăç, хрен, ыхра, гвоздика хумалла та кăмпа тултармалла. Çиеле чиепе хурлăхан çулçи хумалла, пĕр кашăк тăвар хушмалла. Хыççăн тин çеç вĕреме кĕнĕ шыв ямалла. Кĕленчене хупласа сивĕ çĕре лартмалла. Кăмпа 2 эрнерен хатĕр. Ăна хăймапа хутăштарсан тата тутлăрах пулĕ.



## Маринадланă хыр кăрăçĕ

**Çимĕçе хатĕрлеме 1 килограмм хыр кăрăçĕ /рыжики/, 4 лавр çулçи, 3-4 гвоздика, 5 çаврака пăрăç пĕрчи, 1 пуç сухан, 2 кашăк ӳсен-тăран е олива çăвĕ, кăштах укроп, 9 процентлă уксус, тăвар кирлĕ.**

Лайăх çуса тасатнă, çурмалла касса ваклансă кăмпана шыв янă кастрюльте вĕреме кĕриччен тытатпăр. Шывне сăрăхтарса таса шыв тултаратпăр та специ, сухан, тăвар хушса пĕçерме лартатпăр. Вĕреме кĕрсен çулăма вăйсăрлат, кăпăкне пуçтарса илетпĕр. Укроп хушса 25 минут тытатпăр.

Стерилизациленĕ çур литрлă кĕленчене пĕрер чей кашăкĕ çупа уксус, маринадпа кăмпа тултарса хуплатпăр.

Савăта кутăн çавăрса, ăшă япалапа витсе сивĕниччен тытатпăр.

● ЫЙТУ-ХУРАВ

# Модăри пальто. Мĕнле вăл?

*Салам, «Чиперук»! Эпĕ пальто туянасшăн. Кăçал мĕнли модăра-ши?*

***Кира ВАСИЛЬЕВА.***

Улатăр районĕ.



Кĕркунне тĕрлĕ тĕслĕ тăваткалпа илемлетнĕ, милитари стилĕнчи е сăрă, ӳт тĕслĕ, хăмăр пальто суйласан йăнăшмăн. Ыттисенчен уйрăлса тăрас тесен лакпа витнине те туянма пултаратăн. Фасон тĕлĕшĕнчен пальто oversize модельлĕ пулсан аван. Хулпуççи тĕлĕ аяларах вырнаçнине те тăхăнма юрать. Пилĕк тĕлне палăртас килсен пиçиххи вырăнне пĕчĕк корсетпа усă курма сĕнеççĕ стилистсем. Пальто вăрăмăшне кĕлетке çӳллĕшне пăхса суйла: эсĕ çӳллĕ пикетĕк, чĕркуççирен аялараххине хăюллăнах тăхăн.

# Тантăшсенчен аслăрах курăнатăп

*Ырă кун, чиперуксен страници! Манăн шкапра классикăлла тумтир кăна – кĕпе, юбка, пиншаксем… Яланах çапла тумланнипе тантăшсенчен аслăрах курăнатăп. Пĕтĕм тумтире çĕннипе улăштармасăрах стиле урăхлатма пулать-ши?*

***Катерина СТЕПАНОВА.***

Канаш районĕ.



Паллах пулать. Гардеропа стилист куçĕпе тишкермелле çеç. Классикăлла стиле улăштарма спорт стилĕнчи пĕр-икĕ тумтир пайĕ пулăшĕ. Сăмахран, свитшот, çутă тĕслĕ принтпа илемлетнĕ футболка, кроссовкă тата рюкзак. Ун чух свитшот айĕнчен кĕпе тăхăнма е ăна пилĕк тĕлĕнче çыхса хума пултаратăн. Çавăн пекех свитшот классикăлла юбкăпа, кроссовкăпа тата рюкзакпа килĕшӳллĕн курăнĕ.

## Сĕнӳсем

◆Пудра е куç хупанкине сăрламалли писев ӳксе сапаланчĕ тĕк кулянма ан васкăр. Ăна салфеткăпа типтерлĕн пуçтарăр та палеткăна 2-3 тумлам спирт хушăр. Çиелтен апат-çимĕç пленкипе витĕр, йывăр япалапа пусарса хурăр.

◆Ӳт тĕсне лайăхлатакан крема кăштах нӳрĕклетекен крем хушсан ӳт илемлĕн çуталĕ.

◆Ятарлă скраб пулмасан тута ӳтне çемçетме сахăрпа кокос е олива çăвĕнчен хатĕрленĕ скраб пулăшĕ.

◆Уйрăм, пĕчĕк çӳç пĕрчисем вирелле тăраççĕ тĕк çӳçе фенпа çӳлтен аялалла вĕртерсе типĕтĕр.

◆Чĕрнене сăрланă лак часрах типтĕр тесен пӳрнесене темиçе минутлăха сивĕ шыва чикмелле.

● ИЛЕМ КĔТЕСĔ

# Кирек ăçта та килĕшӳллĕ çивĕт



Вăрăм çӳç илемлĕ прическăра тата хитререх курăнать. Ăна тем тĕрлĕ те тирпейлесе хума пулать: çавăрса, çивĕтлесе, кăтралатса. Сирĕн çӳç вăрăм-тăк «Пучах» çивĕте ăсталаса пăхма сĕнетпĕр. Ун валли тура, çӳç резинки, темиçе невидимка тата прическăна çирĕплетекен лак кирлĕ.

Лайăх туранă çӳçе çамка тĕлĕнченех виçĕ пайăркана уйăрмалла. Ахаль çивĕт тунă чухнехи пек пĕр хут çивĕтлемелле. Ун хыççăн айккинчи пайăркасем çумне пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çӳç хушса малалла ĕçлемелле. Çивĕт мăй тĕлĕнче вĕçленмелле. Хатĕр прическăна тыткăчсемпе тата лакпа сирпĕтсе çирĕплетĕр.

Çак çивĕте тĕрлĕ формăпа тата тĕрлĕ еннелле тума юрать. Вăл шкулта та, ытти общество вырăнĕсенче те килĕшӳллĕ курăнĕ.




# Пӗчӗк хуранӑн пӑтти тутлӑ

Ҫак сӑмахри саспаллисене вӗҫне ҫитиччен катса пырса ҫӗнӗрен сӑмахсем тупма тӑрӑшмалла. Эппин, малалла!




Решеткесене асӑрхаман-ши, йӑнӑш ҫапса тухнӑ. Кашни хӑй вырӑнне ларсан ваттисен сӑмахӗ вуланать.




***Николай КРАСНОВ** (Йӗпреҫ районӗ) хатӗрленӗ.*

## Пуҫваттӑмӑш




Икӗ тӑваткалта икӗ сӑмахран тӑракан журнал ячӗ вуланӗ. Унти саспаллисене тӗрӗс сыпӑнтарма юнашар вырнаҫнӑ /ӳкерӗннӗ/ хумсем те пулӑшӗҫ.

# Ребус

Раҫҫейри чи паллӑ уяв ячӗ вуланӗ.




# «Ҫулҫӑ тӑкӑнать кӗркунне» аванворд

Ҫак пуҫватмӑшра пирӗн тӑрӑхри йывӑҫсен ҫулҫисем ӳкерӗннӗ. Цифрӑсемпе палӑртнӑ ҫулҫӑсене йӗркесене вырнаҫтарӑр.




## «Хушаматсем» сӑмахкаҫмӑш



1. Чӑваш боксерӗ, Олимп вӑййисен чемпионӗ. 2. Чӑваш писателӗ, «Канаш» хаҫат редакторӗ /1928-31/. 3. Паллӑ чӑваш тӗрӗҫи. 4. Паллӑ чӑваш математикӗ. 5. Паллӑ чӑваш фехтовальщици, Олимп вӑййисен чемпионки. 6. Чӑваш поэчӗ, «Юмансар» поэма авторӗ. 7. Паллӑ чӑваш чӗлхеҫи, учебниксен авторӗ. 8. Паллӑ чӑваш поэтесси. 9. Чӑваш писателӗ-куҫаруҫӑ.10. Чӑвашран тухнӑ паллӑ балерина. 11. Паллӑ чӑваш фольклорисчӗ. 12. Чӑваш композиторӗ. 13. Чӑваш патшалӑх университетӗнче ректор пулса ӗҫленӗ ӑсчах. 14. Чӑваш композиторӗ. 15. Патӑрьел районӗнчи Сӑкӑт ялӗнче ҫуралнӑ ҫар ҫынни, Мухтав орденӗн тулли кавалерӗ. 16. Чӑваш телекуравӗнче, «Тӑван Атӑлта» ӗҫленӗ журналист, писатель-драматург. 17. ЧПУра чылай журналист хатӗрленӗ ӑсчах, писатель. 18. Чӑвашсен паллӑ юрӑҫи, баритон. 19. И. Яковлева чӑваш букварӗ кӑларма пулӑшаканӗ. 20. Вун ҫичӗ томлӑ чӑваш словарӗн редакторӗсенчен пӗри. 21. Улатӑр район ҫынни, Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи вӑхӑтӗнче самолет тума хӑйӗн укҫине фронта панӑ патриот. 22. Республикипе паллӑ волейбол вӑййин тренерӗ. 23. Элӗк районӗнчи Чӑваш Сурӑм ялӗнче чаплӑ музей йӗркелесе янӑ тавраплӗлӳҫӗ. 24. Паллӑ чӑваш чӗлхеҫи, учебниксен авторӗ.

***Юрий ФРОЛОВ** (Шупашкар) хатӗрленӗ.*